27-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

1944 СЕНТЯБРЬ 23 ШАМАТКУН 188(6683) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

ВЕРХОВНЫЙ ГЛАВНОКОМАНДУЮЩИН ПРИКАЗĔ

Совет Союзĕн Маршалне ГОВОРОВА

ЛЕНИНГРАД фронтĕнчи çарсем, хăвăрт наступлени туса пырса, паян, сентябрĕн 22-мĕшĕнче, Эстони ССР-ĕн столицине ТАЛЛИН (РЕВЕЛЬ) хулине — питех те паха тинĕс-çар базине тата Балтика тинĕсĕнчи пысăк порта—çапăçса туртса илнĕ.

ТАЛЛИН хулине туртса илессишĕн çапăçнă чухне СТАРИКОВ генерал-лейтенантăн, ФЕДЮНИНСКИЙ генерал-лейтенантăн, ТРУБАЧЕВ генерал-майорăн, ПЭРНА генерал-лейтенантăн эстонецсен корпусĕ, СИМОНЯК генерал-лейтенантăн, ЯСТРЕБОВ генерал-майорăн, ЗИНОВЬЕВ полковникăн çарĕсем; артиллери генерал-полковникĕн ОДИНЦОВĂН, артиллери генерал-майорĕн ПОЧИТАЛИНĂН, артиллери генерал-майорĕн КАЗАКОВĂН, артиллери генерал-майорĕн КОЗНОВĂН, ПЕТРОВ полковникăн, АРУ полковникăн, ТОЛКУШЕВ полковникăн, СКОРОБОГАТОВ полковникăн, АЛФЕРОВ полковникăн, ШУЛЯЕВ подполковникăн, ХРУЩ подполковникăн, ПОПОВ подполковникăн артиллерисчĕсем: танковăй çарсен генерал-лейтенанчĕн БАРАНОВĂН, танковăй çарсен генерал-майорĕн ЗАЗИМКĂН, КОВАЛЕВСКИЙ полковникăн, САЕНКОВ подполковникăн, КАРТАШЕВ подполковникăн, ЧЕРНЫХ майорăн, КУЗНЕЦОВ майорăн, ГРИЦЕВ подполковникăн, КУЗИН подполковникăн, КУСЛАКУ подполковникăн, ЧЕСНОКОВ подполковникăн танкисчĕсем; авиаци генерал-лейтенанчĕн РЫБАЛЬЧЕНКĂН, авиаци генерал-лейтенанчĕн САМОХИНĂН, авиаци генерал-майорĕн АНДРЕЕВĂН, авиаци генерал-майорĕн АНТОНОВĂН, МАТВЕЕВ полковникăн, ХАТМИНСКИЙ полковникăн, ГРЕСЬКОВ полковникăн, КУРОЧКИН полковникăн, МОНЖОСОВ полковникăн, ЧЕЛНОКОВ полковникăн, МЕХАННИКОВ подполковникăн летчикĕсем; инженери çарĕсен генерал-лейтенанчĕн БЫЧЕВСКИН, АКАТОВ полковникăн, АФАНАСЬЕВ подполковникăн, ЧАРЦОВ майорăн, ФОМЕНКО майорăн, ВОРОНОВ майорăн саперĕсем; çыхăну çарĕсен генерал-лейтенанчĕн КОВАЛЕВĂН, МУЖЕВ полковникăн связисчĕсем чапа тухнă.

Тунă çĕнтерĕве яланлăха палăртса хăварас тесе, ТАЛЛИН хулине туртса илессишĕн çапăçнă чухне уйрăмах чапа тухнă соединенисемпе чăсене «ТАЛЛИНСКИ» тесе ят пама тата орденсемпе наградăлама тăратас.

Паян, сентябрĕн 22-мĕшĕнче, 23 сехет те 30 минутăра хамăр Тăван çĕршыв столици МУСКАВ, виççĕр çирĕм тăватă тупăпа çирĕм тăватă хут пĕр харăс персе, Ленинград фронтĕнчи паттăр çарсене, вăл шутрах ПЭРНА генерал-лейтенантăн эстонецсен корпусне, Совет Эстонин столицине ТАЛЛИН хулине туртса илнĕскерсене, Тăван çĕршыв ячĕпе салют парать.

Эсир ертсе пыракан çарсене, ТАЛЛИН хулине ирĕке кăларассишĕн çапăçнă çĕрте пулнăскерсене, питĕ чаплă çапăçнăшăн ТАВ ТĂВАТĂП.

Хамăр Тăван çĕршывăн ирĕклĕхĕпе никама пăхăнманлăхĕшĕн çапăçса вилнĕ геройсене ĕмĕр-ĕмĕр мухтав!

Нимĕç захватчикĕсене вилĕм!

Верховный Главнокомандующи
Совет Союзĕн Маршалĕ И. СТАЛИН.

1944 çулхи сентябрĕн 22-мĕшĕ.

ВКП(б) Обкомĕпе Чăваш АССР Совнаркомĕнче

Чăваш республикинчи колхозсенче кĕрхи çĕртме тăвасси çинчен

Чăваш АССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Обкомĕн бюровĕ республикăри колхозсенче кĕрхи çĕртме тăвас ĕç пачах çителĕксĕр пулса пырать тесе шутлаççĕ.

Чылай районсен руководителĕсем, çавăн пекех тата ялсовечĕсемпе колхозсен председателĕсем çак питĕ кирлĕ ĕç çине çиелтен пăхаççĕ, туртăм вăйĕ çитмест, тесе лараççĕ, ĕçсене черетлĕн туса пыраççĕ, кĕрхи çĕртмене тырпулсене пухса кĕртнĕ хыççăн тин тума шутлаççĕ, çакна пула кĕрхи çĕртме тумалли план пурнăçа кĕмесĕр юлма пултарать.

Ялсовечĕсемпе колхозсен нумай руководителĕсем ялхуçалăхĕнчи ĕçсенче майракаллă шултăра выльăхсемпе усă курассине çителĕклĕ хак памаççĕ, кĕлтесене капана хывас ĕçре, çавăн пекех тата тырпула, çĕрулмине, пахча-çимĕçсене тата ытти тĕрлĕ çимĕçсене сывăх вырăнсене турттарас ĕçре майракаллă шултăра выльăхсем лашасем вырăнне ăнăçлăнах ĕçлеме пултарнине, çапла вара лашасен чылай пысăк пайне çав ĕçсенчен хăтарса, вĕсемпе кĕрхи çĕртме тунă çĕрте усă курмалли панине курмаççĕ.

Чылай райсоветсен исполкомĕсем, ВКП(б) райкомĕсем, çĕрĕç органĕсем, ялсовечĕсемпе колхозсен руководителĕсем, агротехника енчен питĕ кирлĕ ĕç пулса тăракан çак мероприяти çине ответсăрла пăхса, 1943 çулта тунă йăнăшсене каллех тăваççĕ.

Кĕрхи çĕртме тăвас ĕçе сарса ярас тĕлĕшпе Пăрачкав, Кувакино, Улатăр, Комсомольски, Первомайски, Шăмăршă, Çĕмĕрле районĕсем чăтма çук майĕпен ĕçлеççĕ, вĕсем кĕрхи çĕртме тумалли государство планне икĕ процент чухлĕ те пурнăçламан. Çав районсенчи парти, совет тата çĕрĕç органĕсем графиксене колхозсене çитерникпех лăпланса ларнă, кĕрхи çĕртме тума çителĕклĕ таран туртăм вăйĕ уйăрса пăртарман, çак паха ĕç хăй тĕллĕн пулса пырасса шаннă.

Çав вăхăтрах малта пыракан колхозсемпе районсем чылай нумай çĕр çинче кĕрхи çĕртме тунă. Кĕрхи çĕртме туни ялхуçалăх культурисен тухăçлăхне ӳстерес ĕçре калама çук пысăк вырăн йышăнса тăнине çав малта пыракан колхозсемпе районсем лайăх кăтартса параççĕ.

Районсен, çĕрĕç органĕсен тата колхозсен руководителĕсен ытти йăнăшĕсем çаксем: çав руководительсем плугсене кĕрхи çĕртме тума хатĕрлесе хурас ĕç çине çаврăнса пăхмаççĕ, плугсен тĕренĕсене хăйрамаççĕ, трактор плугĕсен предплужникĕсем çук. Çаксем пурте кĕрхи çĕртме пахалăхне чакараççĕ, çавсене пула вара çĕре ăшăх сухалаççĕ, шăйрăксем хăвараççĕ, çĕре лайăх çавăрса пăрахмаççĕ.

Чăваш АССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Обкомĕн бюровĕ çапла йышăнаççĕ:

1. Райсоветсен исполкомĕсен председателĕсене, ВКП(б) райкомĕсен секретарĕсене, райçĕрĕç пайĕсен заведующийĕсене, МТС-сен директорĕсене тата колхозсемпе ялсовечĕсен председателĕсене 1944 çулта кашни колхозах кĕрхи çĕртме тума панă государство планне пĕр пăркаланмасăр, государство планне пĕр пăркаланмасăр, кирек мĕнле çанталăкра та пурнăça кĕртмелле тума хушас.

2. Кĕрхи çĕртме тумалли заданне пурнăça кĕртес тĕлĕшпе ответлăха çаксем çине хурас: районсенче—ВКП(б) райкомĕсен секретарĕсемпе райсоветсен исполкомĕсен председателĕсем çине, МТС-сенче—МТС-сен директорĕсем çине, колхозсенче—колхозсен председателĕсем çине.

3. Райсоветсен исполкомĕсене, ВКП(б) райкомĕсене, райçĕрĕç пайĕсен заведующийĕсене тата МТС-сен директорĕсене виçĕ кун хушшинче кашни колхозах пилĕккун хушшинче мĕн чухлĕ кĕрхи çĕртме тумаллине, çав ĕçе тума миçе лашапа вăкăр уйăрса хумаллине, МТС-ăн кашни тракторĕпе тата колхозсен кашни лашипе е пĕр мăшăр вăкăрпа сезонра мĕн чухлĕ кĕрхи çĕртме тумаллине кăтартса пама хушас, кĕрхи çĕртме тума уйăрса хунă тракторсене тата лашасемпе вăкăрсене ытти ĕçе яма чарас.

4. Райсоветсен исполкомĕсене, ВКП(б) райкомĕсене, МТС-сен директорĕсене тата ялсовечĕсемпе колхозсен председателĕсене кĕрхи çĕртме тума чи лайăх лашасемпе тракторсене уйăрса хума хушас. Лашапа ĕçлекен плугсене тата трактор плугĕсене лайăх майлаштарса лартмалла, вĕсен тĕренĕсене лайăх хăйраса хумалла.

Кĕрхи çĕртме тума опытлă сухаçăсене уйăрса хумалла, çав ĕçе тума ятарласа çамрăксен бригадисем тата звеносем туса хумалла, уйрăм сдельщинăна анлăн сармалла, ĕçлекенсене пĕрле апатлантармалла, вĕсем валли хирти стансем тумалла.

5. Райçĕрĕç пайĕсемпе МТС-сен агрономĕсене колхозсенче кĕрхи çĕртме тумалли плана мĕнле пурнăçланине тата кĕрхи çĕртме тунин пахалăхне сăнаса, тĕрĕслесе тăма хушас, çав агрономсене халхи вăхăтра пуринчен ытла кĕрхи çĕртме тунине асăрхаса тăмалла тăвас.

6. Райисполкомсене, ВКП(б) райкомĕсене, МТС-сен директорĕсене, колхозсен председателĕсене кĕрхи çĕртмене мĕнле пахалăхпа тунине тĕрĕслесе тăма хушас, тракторсемпе 20 сантиметртан кая мар, лашапа ĕçлекен плугсемпе — 15 сантиметртан кая мар тарăн сухаламалла тăвас пулать, шăйрăксем хăвармалла мар.

Кĕрхи çĕртмене мĕнле пахалăхпа тунине тĕрĕслесе çаксен йышăнмалла: колхозниксенчен—бригадирăн, уйхир бригадисемпе трактор бригадисенчен—колхоз председателĕн.

7. МТС-сен директорĕсене кĕрхи çĕртме тунă çĕрте мĕнпур предплужниксемпе усă курма, трактор бригадисем валли ăшă вагонсем е çивитиллĕ çуртсем туса хума тата çав бригадăсене хиртех вĕри апат çитерес ĕçе организацилеме хушас.

8. Кĕрхи çĕртме тумалли плана тултарса пыракан тата ирттерсе тултаракан трактористсемпе МТС-сен ытти работникĕсене премилемешкĕн Чăвашсоюза, Центросоюз приказĕ тăрăх, райсоюзсем урлă промтоварсем уйăрса пама хушас.

Чăваш АССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Обкомĕ партипе совет, комсомол организацисене тата республикăри колхозниксене кĕрхи çĕртме тумалли плана часрах тултарас тата ирттерсе тултарас тĕлĕшпе Октябрь уявĕ умĕнхи социализмлă ăмăртăва хутшăнма чĕнеççĕ.

Пĕр ĕçе те кая хăвармалла мар

Авăн çапса государствăна тырă панипе пĕрлех çĕрулмипе техникăллă культурăсене те вăхăтра, пĕр çухатмасăр пухса кĕртмелле!

26 колхоз тырă памалли плана тултарнă

СЕНТЕР, сентябрĕн 22-мĕшĕ. (Телефонпа). Районри колхозсем государствăна тырă памалли графика кулленех ирттерсе тултараççĕ. Паянхи куна районри 26 колхоз тырă памалли плана пĕтĕмпех тултарса çитернĕ. Халĕ вĕсем çитес çулшăн тырă параççĕ.

Кăпас ялсоветĕнчи «КИМ», «Кубас», Акчарти «Сеялка», Сĕнтĕр ялсоветĕнчи «Ударник», Мичурин ячĕпе тăракан колхозсем тырă парас, авăн çапас ĕçсене вĕçленĕ хыççăн çĕрулми кăларма пуçларĕç.

П. ИСАЕВ.

Тырă парса татнă

ИШЛЕЙ. Сăпайкасси ялсоветĕнчи «Ыраш» колхоза Отечественнăй вăрçă инваличĕ В. Кульков юлташ ертсе пыма тытăннăранпа ĕçсем чылай лайăхланчĕç. Обществăллă выльăх-чĕрлĕх хисепĕ çулран-çулах ӳссе пырать. Колхоз кăçал пур выльăхсем енĕпе те государство планне тултарнă.

Колхозра ытти ĕçсем те ăнăçлăн пулса пыраççĕ. Кĕрхи тырăсене 8 ĕçкунĕнче вырса пĕтерчĕç. Çуртыррисене те кĕске вăхăтра пухса кĕртсе, авăн çапма тата çĕрулми кăларма тытăнчĕç. Çуртыррисене вырнă çĕрте нормăна тултарман пĕр колхозник та пулман.

Колхоз сентябрĕн 5-мĕшĕ тĕлне государствăна тырă парса татнă. Вăкăрсемпе анлăн усă курса, ĕçе хăвăртлатнă.

Колхозра комсомолецсемпе çамрăксем тăрăшса ĕçлеççĕ. Комсомол организацин секретарĕ А. Хлебникова юлташ вăкăрпа ĕçлесе кунсерен 3—4 ĕçкунĕ илет. Любовь Вершинина письмоносецра ĕçленĕ хушăрах авăн çапнă çĕртен пĕр кун та юлмасть. Тырă вырнă вăхăтра вăл 50 ĕçкунĕ ытла тунă. Хаçатсемпе çырусене те колхозниксем ватне вăхăтра çитерет.

Халĕ колхозра авăн çапас тата çĕрулми кăларас ĕç хĕрсе пырать. Колхоз государствăна кĕçех çĕрулми парса татать.

И. ГРИГОРЬЕВ.

Государствăна тырă парас ĕçе хăвăртлатрĕç

ЭЛЕК, сентябрĕн 22-мĕшĕ. (Телефонпа). Вăрманкасри Сталин ячĕпе тăракан колхоз членĕсем, Октябрь уявĕ умĕнхи ăмăртăва хутшăнса, хăйсем çине татăклă обязательствăсем илчĕç. Вĕсем сентябрĕн 30-мĕшĕ тĕлне государство умĕнчи парăмсене пурне те парса татма, авăн çапса тата кăнтăр татса пĕтерме пулчĕç.

Çакна вĕсем ăнăçлăн пурнăçласа пыраççĕ. Колхоз паянхи куна пĕрчĕллĕ тырăсене (сĕлĕ, ыраш, тулă, пăрça) тата ытти культурăсене те çапса пĕтерчĕ, государствăна тырă парса татрĕ. Ăмăртура уйрăмах 2-мĕш бригада (бригадирĕ Петров) малта пырать.

Районри ытти колхозсем те юлашки вăхăтра государствăна тырă леçес ĕçе хăвăртлатрĕç. Тени ялсоветĕнчи пур колхозсем те государство умĕнчи малтанхи тивĕçе пурнăçларĕç. Ехремкасси ялсоветĕнчи колхозсем октябрĕн 1-мĕшĕ тĕлне государство умĕнчи обязательствăсене парса татма пулчĕç.

Х. ЛИСИН.

Ĕçсынни депутачĕсен райсовечĕсен исполкомĕсемпе ВКП(б) райкомĕсем тăратнă тăрăх, тырпул пухса кĕртес ĕçре тухăçлăн та лайăх ĕçленĕшĕн ялхуçалăхĕнче малта пыракансен республикăри Хисеп хăми çине çак колхозсене кĕртнĕ:

Куславкка районĕ тăрăх

20. «Динамо» колхоз (председателĕ Ефремов юлташ, пуçламĕш парторганизаци секретарĕ Петров юлташ). Ку колхоз тырăсене срокчен вырса пĕтернĕ, кĕрхи тырăсене агротехника правилисене лайăх пурнăçласа акса хăварнă, государствăна тырă парса татнă.

21. «Коммунист» колхоз (председателĕ Тимаков юлташ). Вăл тырăсене срокчен вырса пĕтернĕ, кĕрхи тырăсене срокран малтан акса хăварнă, государствăна тырă пĕтĕмпех парса татнă.

22. Андреев ячĕпе тăракан колхоз (председателĕ Глебов юлташ, пуçламĕш парторганизаци секретарĕ Федорова юлташ). Ку колхоз тырăсене августăн 30-мĕшĕнче вырса пĕтернĕ, сентябрĕн 12-мĕшĕ тĕлне мĕнпур кĕлтесен 81 процентне капана хывнă, государствăна тырă парса татнă.

Шăмăршă районĕ тăрăх

23. «Канаш» колхоз (председателĕ Богатов юлташ). Çак колхоз тырăсене срокчен вырса пĕтернĕ, кĕрхи тырăсене чи лайăх вăхăтра акса хăварнă, государствăна тырă парса татнă.

24. «Новая деревня» колхоз (председателĕ Давыдов юлташ). Колхоз тырăсене срокчен вырса пĕтернĕ, кĕрхи тырăсене лайăх акса хăварнă, государствăна тырă парса татнă.

5 колхоз авăн çапса пĕтернĕ

СЕНТЕРВАРРИ. сентябрĕн 22-мĕшĕ. (Телефонпа). Районри хăшпĕр колхозсем авăн çапас ĕçе лайăх йĕркеленĕ. Ку тĕлĕшпе уйрăмах «Красная Армия», «Малалла», партин 17-мĕш съезчĕ ячĕпе тăракан, «1-ое мая» тата «Восток» колхозсене палăртмалла.

«Красная Армия» колхозра (председателĕ коммунист Анкудинов юлташ) авăна шыв арманĕн вăйĕпе çапнă. Кунта вăкăрсемпе ĕçре туллин усă кураççĕ. Колхозниксем, çĕрне-кунне пĕлмесĕр ĕçлесе, сентябрĕн 5-мĕшĕ тĕлне авăн çапса пĕтерчĕç. Парторганизаци секретарĕ З. Базаровăпа комсомол организацийĕн секретарĕ Кузнецов юлташсем тата уйрăм коммунистсем те ĕçе большевикла ертсе пыраççĕ. Вĕсем—агитаторсем. Колхозниксемпе пĕрле ĕçлесе, вĕсем агитацилле ĕçе кулленхи ĕçпе çыхăнтарса пыраççĕ, колхозниксене фронтри хыпарсемпе тĕнчери лару-тăру çинчен, районри тата республикăри малта пыракан колхозсен ĕçĕсем çинчен тăтăшах пĕлтерсе тăраççĕ. Лайăх ĕçлекенсене Хисеп хăми урлă палăртса, татах та лайăхрах ĕçлеме хавхалантарнă, стена хаçачĕсемпе боевой листоксем тăтăшах кăларса тăнă.

Колхозра пур ĕçе те тивĕçлипе ертсе пынине кура, колхоз сентябрĕн 1-мĕшĕ тĕлне 1944—1945 çулсемшĕн государствăна тĕштырă парса татнă. Ытти енĕпе те колхозăн государство умĕнче парăмсем çук.

Çапла ĕнтĕ, асăннă колхозсенчи колхозниксем, вăй-хала шеллемесĕр ĕçлесе, районра чи малтан авăн çапса пĕтерчĕç. Халĕ вĕсем хĕрсех çĕрулми кăлараççĕ.

План тăрăх кăçал районри колхозсен 10.180 гектар çинчи тырра çапмалла пулсан, сентябрĕн 19-мĕшĕ тĕлне 5.761 гектар çинчи тырпула çапса пуçтарнă. Районри хăшпĕр колхозсем, 1944 çулшăн государствăна тырă парса татса, çитес çулшăн аванс шучĕпе 120 тонна панă.

Ĕçре çитĕнӳсем чылай. Анчах та пур колхозсем те пĕр пек хастарлăхпа ĕçлени курăнмасть-ха. Сăмахран, Тутаркассинчи «Моряк», Юртакассинчи «Искра», Шуршăлти Чкалов ячĕпе тăракан тата Турханкассинчи «Верный путь» колхозсенче авăн çапас ĕç сӳрĕккĕн пулса пырать. Ку колхозсен руководителĕсем колхозри ĕç вăйне тĕрĕс организацилемен тата вăкăрсемпе усă курман пирки юлса пыраççĕ.

С. ЖЕЛЕЗКОВ,
Райçĕрĕç пайĕн заведующийĕ.

Клевера икшер хут çулчĕç

ЭЛЕК, сентябрĕн 22-мĕшĕ. (Телефонпа). Хуравартн «Заветы Ильича» колхоз кăçал 8 гектар çинчи клевера иккĕмĕш хут çулса илчĕ. Кĕçĕн Тукташри «Сунтал» колхоз та 4 гектар çинчи клевера иккĕмĕш хут çулса капана хывре.

ГОСУДАРСТВАНА ТЫРА ПАМАЛЛИ ПЛАНА РЕСПУБЛИКАРИ РАЙОНСЕМ СЕНТЯБРЕН 20-МЕШЕ ТЕЛНЕ МЕН ЧУХЛЕ ТУЛТАРНИНЕ КАТАРТАКАН

СВОДКА

Районсем	Миçе процент тултарнă
Вăрнар	93,5
Шупашкар	83,3
Çĕрпӳ	78,6
Муркаш	77,3
Ишлей	73,8
Шăхасан	71,8
Октябрьски	71,6
Советски	71,5
Сĕнтĕр	70,4
Чурачăк	70,1
Калинино	68,3
Канаш	66,4
Куславкка	66,1
Красноармейски	65,8
Сĕнтĕрвăрри	65,0
Вăрмар	62,4
Элĕк	60,4
Етĕрне	59,5
Йĕпреç	58,8
Елчĕк	50,1
Тăвай	48,7
Улатăр	48,5
Çĕмĕрле	46,0
Первомайски	45,9
Комсомольски	45,3
Хĕрлĕ Чутай	44,4
Пăрачкав	37,8
Чкаловски	33,2
Шăмăршă	32,7
Кувакино	24,6

Юлса пынă колхозсем мала тухаççĕ

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ, сентябрĕн 22-мĕшĕ. (Телефонпа). Юлашки кунсенче районри колхозсем авăн çапас тата кĕлте кӳрес ĕçсене чылаях хăвăртлатрĕç. Районри 80 колхозран 58-шĕ кĕлте кӳрсе пĕтернĕ. Паянхи кун тĕлне районра пурĕ 17.920 гектар çинчи тырра капана хывнă, 10.000 гектар çинчи тырра çапнă.

Красноармейски ялсоветĕнчи Сталин ячĕпе тăракан тата «Жнейка», «Комбайн» колхозсем иртнĕ çулсенче юлса пыракансен ретĕнче пулнă. Кăçал вĕсем, тырпулсене ăнăçлăн пуçтарса кĕртсе, малти вырăна тухрĕç. «Жнейка» колхоз сентябрĕн 10-мĕшĕ тĕлне пĕтĕм тĕштырăсемпе пăрçа йышши культурăсене çапса пĕтернĕ, государствăна тырă памалли плана тултарнă тата 1945 çулшăн 200 пăт ытла панă. Колхозра тырпул пухса кĕртес ĕçре лайăх тĕслĕхсем кăтартнăшăн 27 колхознике ĕçшĕн хушса тӳлеççĕ. Сталин ячĕпе тăракан колхоз та авăн çапса пĕтернĕ.

Çав вăхăтрах хăшпĕр колхозсенче кĕлте кӳресси юлса пырать-ха. «Чăваш Коммуни», «Звезда», Мартынкасси ялсоветĕнчи Молотов ячĕпе тăракан колхозсенче вăкăрсемпе тата колхозниксен ĕнисемпе усă курмаççĕ, ĕçе те тивĕçлипе йĕркелемен. Çавăнпа та вĕсенче ĕç сӳрĕк пырать. Молотов ячĕпе тăракан колхозăн тата 150 гектар çинчен кĕлте кӳмелле.

Малта пыракан колхозсем кая юлакан колхозсене пулăшас ĕçе организациленĕ. Çапла, Молотов ячĕпе тăракан колхоза пулăшма кӳршĕри колхозсем 8 лаша уйăрса панă.

С. ШАДИН.

Совет Информаци Бюровĕнчен

СЕНТЯБРĔН 21-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

Сентябрĕн 21-мĕшĕнче ТАЛЛИН хули енче ЛЕНИНГРАД фрончĕн çарĕсем, наступлени туса пырса, РАКВЕРЕ хулипе узловой чугун çул станцине туртса илнĕ, çавăн пекех тата, тăшманпа çапăçса, халăх пурăнакан ытти 200 пункта ытла йышăннă, вăл шутра — АЗЕРИ, КАБАЛА, КАДРИНА, КАУКСИ, РАДНА, ЛАЭКВЭРИ, ЛОХУ, СИМУНА, ВЯЙКЭ-МАРЬЯ, РАККЕ, ПИККНУРМЕ ятлă пысăк ялсем тата АЗЕРИ, ВАЭКЮЛА, РАККЕ ятлă чугун çул станцийĕсем. НАРВА хулинчен хĕвеланăç еннелле наступлени туса пыракан çарсем ЧУДЬ кӳллипе ФИНН заливĕ хушшинчи вырăна тăшмантан пĕтĕмĕшпех тасатнă, вара вĕсем ЧУДЬ кӳллин хĕвеланăç хĕррипе наступлени туса пыракан çарсемпе пĕрлешнĕ.

ВАЛГА хулинчен çурçĕр-хĕвеланăçнерехре тата хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем, тăшманпа çапăçса, темиçе ял туртса илнĕ.

ИЕЛГАВА (МИТАВА) хулинчен хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем тăшман пехотипе танкĕсен пысăк вăйĕсен атакисене ăнăçлăн сирсе янă. КРОСНО хулинчен кăнтăртарахра тата кăнтăр-хĕвелтухăçнерехре пирĕн çарсем ТЕОДОРУВКА, ДУКЛЯ, ЯСЕНКА, ШКЛЯРЫ, ДАРУВ, МОЩАНЕЦ, ЩАВНЕ, НОВОСЮЛКИ ятлă ялсене туртса илнĕ.

Румынин хĕвеланăç пайĕнче пирĕн çарсем, Румыни çарĕсемпе пĕрле çапăçса, халăх пурăнакан 100 пункта çити туртса илнĕ, вăл шутра — ЛИПОВА хулипе чугун çул станцийĕ, ИНЕУ, ШИКУЛА, СЕЛЕУШ, ПЫНКОТА, ШИРИА, ШЕНДОРФ, ВИНГА, КЕЛАЧА, БЕЧИКЕРЕКУЛ ятлă пысăк ялсем тата ЙНЕУ, МОКРЯ, ТАРНОВА, ПЫНКОТА, ШИРИА ЧИЧИР, ВИНГА, КОКОТА, МАРУЦИ ШОАРЕ, БЕШЕНОВА-НОУА, ТЕМЕСКЕНЕ, ХОДОНЬ ятлă чугун çул станцийĕсем.

Фронтăн ытти участокĕсенче разведчиксем шыраса çӳренĕ.

Сентябрĕн 20-мĕшĕнче пирĕн çарсем мĕнпур фронтсенче нимĕçсен 47 танкне çĕмĕрсе тăкнă. Сывлăшри çапăçусенче тата зенитлăй артиллери тăшманăн 11 самолетне персе ӳкернĕ.

☆ ☆ ☆

ПИРĔН АВИАЦИ ДЕБРЕЦЕН ХУЛИПЕ ЧОП ХУЛИНЕ ЙЫШЛАН ВĔÇСЕ КАЙСА ТАПАННИ

Сентябрĕн 21-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле пирĕн инçене вĕçекен авиаци Венгрири Дебрецен хулипе чугун çул узелне тата Ужгород хулинчен 25 километр кăнтăртарахра ларакан Чоп хулипе чугун çул узелне йышлăн вĕçсе кайса тапаннă.

Дебрецен хулинче совет самолечĕсем чугун çул узелĕ çине тата хулан вăта çĕрти пайĕпе хĕвелтухăç пайĕнчи çар склачĕсем çине бомбăсем пăрахнă. Бомбăсем пăрахнине пула, нумай тĕлте пушарсем тухнă, вĕсенчен виççĕшĕ уйрăмах вăйлă пушарсем пулнă. Чугун çул узелĕнче виçĕ çар поезчĕ тата горючипе боеприпассен склачĕ сирпĕнсе кайнă. Çар склачĕсен территорийĕнче çав тери вăйлă взрыв пулнă. Çав взрывăн çулăмĕ 1.000 метр çӳллĕше хăпарнă.

Чоп чугун çул узелĕнче, бомбăсем пăрахнине пула, пушарсем тухнă. Вагонсемпе платформăсем çуннă. Пушарсенче взрывсем питĕ нумай пулнă, вĕсенчен виççĕшĕ, чугун çул узелĕн çурçĕр-хĕвеланăç пайĕнче пулнăскерсем, уйрăмах вăйлă пулнă.

☆

Ленинград фрончĕн çарĕсем çаплах наступлени туса пынă. Нимĕçсем хирĕç тăнине çĕнтере-çĕнтере, пирĕн çарсем 25 километр малалла кайнă. Çулсен паха узелĕ пулса тăракан Раквере хулине туртса илнĕ, 800 нимĕç салтакĕпе офицерне ытла пĕтерсе тăкнă. 30 тупă, 200 пулемет тытса илнĕ, 200 гитлеровеца ытла тыткăна илнĕ. Саре ялĕшĕн питĕ хаяр çапăçу пулса иртнĕ. Пĕр гвардейски Ленинградски полк Саре ялне çавăрса илнĕ те унти тăшман гарнизонне аркатса тăкнă. Çав çапăçура старши сержант Кудрявцев ертсе пыракан бронебойщиксен отделенийĕ тăшманăн 4 танкĕпе хăй тĕллĕн çӳрекен 2 туппине пĕтерсе тăкнă. Эстонецсен Пэрна генерал-лейтенант ертсе пыракан корпусĕнчи рядовойсем, сержантсем тата офицерсем питĕ ăста тата паттăррăн та хăюллăн çапăçаççĕ. Нимĕçсен оборонине татса, корпус чаçĕсем çав тери хăвăрт малалла куçса пыраççĕ, хăйсен çулĕсем çинче тĕл пулакан нимĕç захватчикĕсене арката-арката тăкаççĕ.

* * *

Валга хулинчен çурçĕр-хĕвеланăçнерехре тата хĕвеланăçнерехре тăшман унччен хатĕрлесе хунă оборона позицийĕсенче хытă хирĕç тăрать. Паян Руйена хули патнелле пыракан чугун çул районĕнче хаяр çапăçусем пулса иртнĕ. Пĕр чаçри боецсем, артиллери пулăшнипе, каç пулса килнĕ тĕлелле нимĕçсене пĕр питĕ вăйлă çирĕплетнĕ пунктран хĕссе кăларнă. Хăй тĕллĕн çӳрекен виçĕ тупă, 20 хир туппи, 6 миномет тата ытти трофейсем те тытса илнĕ. Тырва хулинчен хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем нимĕçсен 61-мĕш пехотнăй дивизийĕнчи 151-мĕш полка аркатса тăкнă.

* * *

Иелгава (Митава) хулинчен хĕвеланăçнерехре тăшман пехотин тата танкĕсемпе хăй тĕллĕн çӳрекен тупписен пысăк вăйĕсем пирĕн позицисене атакăланă. Кунĕпех хаяр çапăçусем пынă. Совет пехотинецĕсемпе артиллерисчĕсем тăшман хĕсне сирсе янă, нимĕçсене çынсемпе техника тĕлĕшĕнчен пысăк çухату тӳстернĕ. Тепĕр участокра нимĕçсем умлăн-хыçлăн 14 хутчен контратака тунă. Çав контратакăсем пĕри те ăнăçлă пулман. Темĕн чухлĕ çухату тӳсет пулин те, тăшман кунти çапăçăва çĕнĕ те çĕнĕ вăйсем кĕрте-кĕрте ярать, темĕн чухлĕ вăй пĕтерсе те пулин пирĕн чаçсене каялла хĕссе кăларма хăтланать. Анчах та гитлеровецсен пур контратакисем те совет çарĕсен çĕнтерейми вăйĕ çине пырса тăрăнаççĕ. Кун каçиччен çав районра 1.000 нимĕç салтакĕпе офицерне çити пĕтерсе тăкнă. Тăшманăн 35 танкĕпе хăй тĕллĕн çӳрекен туппине çунтарса янă е персе çĕмĕрнĕ.

Пирĕн авиаци нимĕçсен пĕр çĕре пухăнса тăнă çарĕсемпе техникине тата чугун çул эшелонĕсене пыра-пыра çапнă. Совет летчикĕсем 100 автомашинăна çити пĕтерсе тăкнă, 6 боеприпас складне сирпĕнтерсе янă, темиçе артиллери батарейине пусарса лартнă. Рига-Сортировочная ятлă чугун çул станцийĕнче боеприпассем тиенĕ 2 эшелона ӳпĕнтерсе янă.

* * *

Кросно хулинчен кăнтăртарахра пирĕн çарсем хаяррăн çапăçнă хыççăн тăшманăн вăйлă çирĕплетнĕ Теодорувка тата Дукля ятлă опорнăй пункчĕсене туртса илнĕ. Çав пунктсемшĕн пынă çапăçусенче гитлеровецсене пĕр батальона çити пĕтерсе тăкнă. Кросно хулинчен кăнтăр-хĕвелтухăçнерехре тăшман ту çинчи çӳллĕ вырăнсенче çирĕпленсе ларнă та, тупăсемпе тата пулеметсемпе персе, совет çарĕсене малалла кайма чарса тăнă. Тăшмана тусем хушшипе аякран кайса çавăрса илсе, пĕр чаçри боецсем тăшман хирĕç тăракан узелсене тылран тапаннă. Пирĕн боецсем гитлеровецсене аркатса тăкнă та лайăх позицисем йышăннă. Нимĕçсенчен 16 тупă, 45 пулемет тата ытти трофейсем те тытса илнĕ.

* * *

Румынин хĕвеланăç пайĕнче совет çарĕсем, Румыни çарĕсемпе пĕрле кĕрешсе, Липова хулипе чугун çул станцине çав тери хăвăрт пырса çапса туртса илнĕ. Нимĕçсемпе венгерсем ним йĕрки-паллисĕр Мурешул шывĕн леш енне чакса тарнă. Вĕсене пысăк çухату кӳнĕ. Тăшмана хыççăнах хăваласа пырса совет чаçĕсемпе Румыни чаçĕсем Пынкота ятлă чугун çул станцине туртса илнĕ. Ку станци Румынипе Венгри чиккинчен 35 километрта ларать. Тепĕр участокра пирĕн çарсем гитлеровецсен икĕ контратакине сирсе янă, вара, малалла куçса пырса, халăх пурăнакан темиçе пункта туртса илнĕ. 500 салтака тыткăна илнĕ, вĕсем хушшинче нимĕç эсэсовецĕсен «Полицай» ятлă моторизованнăй дивизийĕнчи салтаксемпе офицерсем нумай.

* * *

Хĕрлĕ Ялавлă Балтика флочĕн авиацийĕ Балтика тинĕсĕнче тăшманăн 4.000 тонна таякан транспортне шыва путарнă. Финн заливĕнче совет летчикĕсем нимĕçсен тральщикне атакăласа шыва путарнă.

Фашистла нимĕç захватчикĕсем Минск хулинче тунă тискер ĕçсем

Фашистла нимĕç оккупанчĕсем Белорусси ССР-ĕн столицинче—Минск хулинче тунă преступленисене специальнăй комисси тĕрĕслесе тухнă. Çав комисси нимĕçсен концентрациллĕ лагерĕсене пăхса тухнă, гитлеровецсен тискер ĕçĕсене хăйсен куçĕпе курнă тата нимĕçсен асапне тÿссе ирттернĕ 120 çынран ытла ыйтса пĕлнĕ, çавăн пекех тата çав тискер ĕççене хăйсем курнă е хăйсем хутшăннă нимĕç офицерĕсемпе салтакĕсенчен, Хĕрлĕ Çар аллине тыткăна лекнĕскерсенчен, ыйтса тĕпчене. Асăннă комисси тата Чрезвычайнăй Государственнăй Комисси членĕ Н. Н. Бурденко академик тĕрĕслесе тухнă ĕççен результачĕсене фашистла нимĕç захватчикĕсем тата вĕсемпе пĕр каварлисем тунă тискер ĕççене тĕпчесе палăртас тĕлĕшпе ĕçлекен Чрезвычайнăй Государственнăй Комиссин пĕлтерĕвĕнче пичетлесе кăларнă. Çав документра нимĕç ирсĕрĕсем Белоруссин столицинче тунă тискер ĕççен çав тери хăрушă картинине кăтартса панă.

Пирĕн çĕршыв çине ултавлăн тапăнма хатĕрленсе, Гитлер 1941 çулхи июнĕн 17-мĕшĕнче ятарласа приказ кăларнă. Нимĕçсен 267-мĕш стрелковăй дивизийĕнчи çар трибуналĕн председателĕ пулнă капитан Райхоф Юлиус кăтартса панă тăрăх, Гитлерăн çав приказĕнче çапла каланă пулнă: «Нимĕç салтакĕсен совет халăхне çаратма тата вĕлерсе пĕтерме право пур...» тенĕ. Гитлерăн çав приказĕ нимĕç çарĕн офицерне татах та анлăрах правăсем панă. Нимĕç офицерĕ вырăс çыннисене хăй мĕнле шутланă, çавăн пек вĕлерме пултарнă. Нимĕç çарĕн командирне мирлĕ халăх тĕлĕшпе карательнăй мерăсем йышăнма анлă ирĕк панă, вăл хуласемпе ялсене пĕтĕмĕшпех çунтарса яма, халăхран апатçимĕçпе выльăх-чĕрлĕх туртса илме, совет гражданĕсене Германие хăй пĕлнĕ пек хăваласа кайма пултарнă. Гитлерăн приказне нимĕç çарĕн рядовой составĕ патне Германи Совет Союзне тапăнниччен пĕр кун малтан çитернĕ.

Гитлерăн çав приказне пурнăçа кĕртсе пырса, фашистла нимĕç мерзавецĕсем хăйсен алли айне кам лекнĕ, çавсене пурне те асаплантарнă, çаратнă, вĕлернĕ. Минск хулине çĕмĕрсе кĕрсе, вĕсем кунта юнлă терророа пусмăрлăхăн режимне туса хунă. Хулара хăйĕнче тата ун тавращĕнче гитлерла палачсем концентрациллĕ лагерьсен пысăк системине туса хунă, çав лагерьсенче пиншер совет гражданне вĕлерсе пынă. Минскри Широкая урамĕнче пулнă лагерьтен чĕррĕн сахал çын хăтăлса тухма пултарнă. Çав лагерьте пулнă Л. А. Мойсиевич комиссие çапла пĕлтернĕ: 1943 çулхи августăн 21-мĕшĕнчен пуçласа 1944 çулхи июнĕн 30-мĕшĕччен нимĕç палачĕсем 10.000 совет çыннине яхăн пĕтерсе тăкнă. Вĕсем хушшинче ватă çынсемпе çул çитмен ачасем тата хĕрарăмсем нумай пулнă.

Çынсене вĕлернĕ çĕрте гитлеровецсем ятарласа тунă «душегубка» текен автомашинăсемпе анлăн усă курнă. Çавăн пек кашни машинăна 70—80-шар çынна тĕртетĕрте кĕртнĕ те вĕсене унта сĕрĕм газĕсемпе пăчăхтара-пăчăхтара вĕлернĕ. Широкая урамĕнчи лагерьтен çынсене «душегубка» ăшне тиесе кунсерен 3—4-шар хут ăсатнă. 1943 çулхи февралĕн 17-мĕшĕпе 26-мĕшĕ хушшинче кăна çак лагерьтен 3.000 совет гражданне турттарса тухса, «душегубкăсенче» пăчăхтара-пăчăхтара вĕлернĕ.

Нимĕç ирсĕрĕсем çынсене ахаль мунчасенче те сĕрĕм тиверте-тиверте нумай вĕлернĕ. 1941 çулхи сентябрь уйăхĕнче нимĕçсем çав майпа хула тулашĕнчи Новинки ялĕнчи больницăра выртакан 200 çынна вĕлернĕ.

Ятарласа тунă гетто текен лагерьте нимĕçсем 100.000 еврее çити хупса усранă. Çынсене кунта пĕр сăлтавсăрах вĕлернĕ, вĕсенчен мăшкăлланă, вĕсене йытăсем ярса таткаласа çура-çура пăрахнă, нумай чухне çынсене чĕрĕллех вутта пăрахнă.

Минск хулинчен 10 километр аяккарах- [illegible]

мĕнпур ялсенчен лавсем мобилизациленĕ. 1943 çулхи кĕркуннех гитлеровецсем вилнĕ çынсен ÿчĕсене çунтарма ятарласа крематори кăмаки тунă. Çав крематори кăмаки патĕнче пенĕ патронсен гильзисем тата çурăлса кайнă гранатăсен ванчăкĕсем нумай сапаланса выртаççĕ. Çакăнтан ĕнтĕ нимĕçсем çынсене кăмака умĕнчех е кăмакарах пере-пере вĕлернине пĕлме пулать.

1944 çулхи июнĕн юлашки кунĕсенче Хĕрлĕ Çар ăнăçлăн наступлени туса пынине кура, фашистла чуниллисем çынсене пĕтермелли çĕнĕ меслет шухăшласа кăларнă. Июнĕн 29-мĕшĕпе 30-мĕшĕнче нимĕçсем лагерьсенчен çынсене тата çын виллисене Малый Тростинец ялне турттарма тытăннă. Кунта палачсем вилнĕ çынсене сарайсене шаршанласа хунă, чĕррисене пере-пере пăрахнă та вут тивертсе янă. Малый Тростинец ялĕнчи пĕр сарайне тĕрĕсленĕ чухне комисси питĕ нумай кĕл, çын шăммисем, çавăн пекех тата çунса пĕтмен виле юлашкийĕсем нумай тупнă. Юнашарти пĕрене купи çинче арçынсемпе хĕрарăмсен тата ачасен пĕтĕмĕшпех çунса пĕтмен 127 вилли юлнă.

Хăйсен тискер ĕçĕсен йĕрĕсене пытарса хăварас шутпа, гитлеровецсем асаплантарса вĕлернĕ совет çыннисен виллисене пысăк шăтăксене пытарнă та çиелтен никам пĕлмелле мар маскировка туса хупла-хупла хăварнă. Минск хулинчен 5 километр аяккарахра, Глинищев ялĕ çывăхĕнче, çавăн пек 197 шăтăк тупнă. Çав шăтăксене советăн тыткăна лекнĕ çар çыннисене, нимĕç палачĕсем асаплантарса вĕлернĕскерсене, 80.000 çынна яхăн пытарнă. Благовщина вăрманĕнче 34 шăтăк тупнă, вĕсене çиелтен чăрăш лăссисемпе витсе хăварнă пулнă. Следстви кунта фашистсем 150.000 çынна çити вĕлерсе пĕтернине палăртнă. Çынсене çавăн пек нумай йышлăн пытарса хăварнă шăтăксене-масарсене Петрашкевичи хуторĕ патĕнчи Уручье вăрманĕнче, Дрозды поселокĕ çывăхĕнче, Минскри еврейсен масарĕнче, Кальварийски масарта, Тучинкăра, культурăпа кану паркĕнче тата ытти нумай вырăнсенче тупнă.

Следстви çакна тĕпчесе палăртнă: Минск хулипе унăн тавращĕнче гитлеровецсем 300.000 совет гражданне яхăн вĕлерсе пĕтернĕ, ку шута крематори кăмакинче çунтарса пĕтернисем кĕмеççĕ.

Фашистла нимĕç захватчикĕсем Минск хулине çав тери хăрушшăн аркатса пĕтернĕ. Вĕсем культура учрежденийĕсене, театрсене, аслă шкулсене, наукăпа тĕпчев учрежденийĕсене, 47 шкула, ачасен 24 садне, пионерсен двореçне, ача çуратмалли икĕ çурта, сывлăха сыхлас тата халăха çутта кăларас тĕлĕшпе ĕçлекен ытти нумай тĕрлĕ учрежденисене ишĕлтерсе пĕтернĕ. Нимĕçсем В. И. Ленин ячĕпе тăракан библиотекăран чи хаклă кĕнекесене 1,5 миллион тенкĕлĕх, наукăсен академийĕн библиотекинчен 300.000 том кĕнеке, çавăн пекех тата университетпа институтсенчен çав тери нумай кĕнекесем Германие илсе кайнă. Хулари чи пысăк 23 предприятие, 4 гостиницăна сирпĕнтерсе е çунтарса янă, водопровода, канализацие, телефонпа телеграф сыхăнăвне юрăхсăра кăларнă. Совет предприятийĕсенче нимĕçсем хăйсен фирмисене вырнаçтарса тухнă пулнă, вĕсенче совет гражданĕсене захватчиксемшĕн ирĕксĕрлесе ĕçлеттернĕ.

Ку мĕнпур фактсем ĕнтĕ çакна питех те ĕнентермелле кăтартса параççĕ: фашистла нимĕç захватчикĕсем, юнлă терророа пусмăрласа, белоруссене нимĕç чурисем туса хума, белорусс халăхĕн культурине пĕтерсе тăкма ĕмĕтленнĕ.

Нимĕç захватчикĕсем Минск хулинче тунă мĕнпур тискер ĕççемшĕн, культурăпа материальнăй пуянлăхсене ишĕлтерсе пĕтернĕшĕн, мирлĕ гражданçемпе тыткăна лекнĕ çар çыннисене асаплантарса вĕлерсе пĕтернĕшĕн пĕтĕмĕшпех гитлерла правительство, унăн верховнăй командованийĕ, çавăн пекех тата çав тискер ĕççене организацилекенсемпе тÿрремĕнех хăйсем туса пыраканçем ответлă пулса тăраççĕ, уйрă- [illegible] ... çĕре вута турттарма оккупантсем [illegible] ответ тытĕç.

САХĂР ТУМА ПУÇЛАНА

Сахăр кăшманĕ акакан тĕп районсенче сахăр тума пуçланă. Киргизипе Казахстанра темиçе пин пăт сахăр туса кăларнă та ĕнтĕ.

Винница, Харьков тата сахăр кăшманĕ акакан ытти облаççенчи колхозниксем сахăр завочĕсене темиçе çĕр пин тонна сахăр кăшманĕ ăсатнă. Курск облаçĕнче 10 сахăр завочĕ ĕçлеме тытăнать. (ТАСС).

УКÇАПА ЯПАЛАСЕН 4-мĕш ЛОТЕРЕЙИ

СССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ СССР Наркомфинне октябрĕн 25-мĕшĕнчен пуçласа укçапа япаласен 4-мĕш лотерейине ирттерме ирĕк панă. [illegible]

Заем выляве

[illegible]

3.000 тенкĕлĕх выигрыш заемăн выляса илмелли выпускĕн 92 разрядĕнче пуринче те 87.247-мĕш серин 35-мĕш номер облигацийĕ çине ÿкнĕ. Пиншер тенкĕлĕх выигрышсем çак серисемпе облигацисем çине ÿкнĕ: 95.684-мĕш сери, 19-мĕш номер облигаци; 94.603-мĕш сери, 47-мĕш номер облигаци; 94.428-мĕш сери, 45-мĕш номер облигаци; 96.855-мĕш сери, 7-мĕш номер облигаци; 98.374-мĕш сери, 6-мĕш номер облигаци.

ПЕРЕКЕТ КАССИСЕНЕ ХЫВНА ВКЛАДСЕН СУММИ ÿССЕ ПЫРАТЬ

Юлашки уйăхсенче перекет кассисене вкладсем ытларах хывни палăрать. 1944 çулхи пĕррĕмĕш кварталта перекет кассисене хывнă вкладсен сумми 103 миллион тенкĕ чухлĕ ÿснĕ. Иккĕмĕш кварталта вăл 118 миллион тенкĕ чухлĕ ÿснĕ. Вкладсен сумми июльпе август уйăхĕсенче вара тата ытларах ÿснĕ, вăл çав уйăхсенче 151 миллион тенкĕ чухлĕ ÿснĕ.

Çапла ĕнтĕ, çак çул пуçланнăранпа халăхăн Совет Союзĕнчи перекет кассисенче усракан вклачĕсен сумми 372 миллион тенкĕ чухлĕ ÿснĕ. (ТАСС).

СТАЛИНГРАД ХУЛИ ВАРРИНЧИ ПЛОЩАДĔН ПРОЕКТНЕ ХАТĔРЛЕМЕ КОНКУРС ПУÇЛАНА

СССР Совнаркомĕ çумĕнчи Архитектура комитечĕ тата Совет архитекторĕсен союзĕ Сталинград хули варринчи площадĕн проектне хатĕрлеме конкурс пуçласа янă, çав площадьре Сталинград хулине паттăррăн хÿтĕленĕ çынсене асăнса лартнă памятник пулмалла.

Чи лайăх проектсемшĕн 20.000 тенкĕлĕх, 15.000 тенкĕлĕх, 10.000 тенкĕлĕх, 7.000 тенкĕлĕх тата 5.000 тенкĕлĕх премисем параççĕ. Проектсене тăратмалли юлашки срок—çак çулхи ноябрĕн 5-мĕшĕ. (ТАСС).

Отечественнăй вăрçăра аманнă офицер-инвалидсен комитечĕ

Çак кунсенче Шупашкар хула военкоматĕнче Отечественнăй вăрçăра аманнă офицер-инвалидсен пухăвĕ пулса иртрĕ. Пуху офицер-инвалидсен комитетне суйларĕ. Çав комитет инвалид пулнă офицерсен пурнăçпа йăла условийĕсене лайăхлатас, вĕсене ĕçе вырнаçтарас, сывалма пулăшас тата вĕсем хушшинче политикăллă-массăллă ĕçе йĕркелес тĕлĕшпе ĕçлет.

Комитет составĕнче Кольцов (председателĕ), Стариков тата Добрынин юлташсем.

Комитет офицер-инвалидсен ыйтăвĕсене хăвăртрах тивĕçтермелле тăвас шутпа военкоматра дежурнăйсем тăратать. Дежурнăйсем тунтикунсемпе эрнекунсенче каçхине 7 сехетрен пуçласа 9 сехетчен пулаççĕ.

Хĕвеланăç Европăри вăрçă ĕçĕсем

ЛОНДОН, сентябрĕн 21-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен экспедициллĕ вăйĕсен верховнăй командованийĕн штабĕ паян пичетлесе кăларнă пĕлтерÿре çапла каланă:

Леймеген районĕнче союзниксен çĕр çинчи вăйĕсем авиадесант чаçĕсемпе пĕрлешнĕ, унта халь вăйлă çапăçусем пыраççĕ. Татса кĕнĕ савăлăн тĕпне аслăлатнă. Çĕр çине аннă авиадесант чаçĕсем патне çĕнĕ вăйсем пырсах тăраççĕ.

Бельгире союзниксен çарĕсем Леопольд каналĕ патнелле куçнă. Антверпен хулинчен хĕвеланăçнерехре, Шельда районĕнче, вĕсем чылай пысăк çитĕнÿсем тунă.

Сентябрĕн 20-мĕшĕнче йывăр бомбардировщиксем Германин Кале хулинчи гарнизонĕ çине тата унти çирĕплетнĕ позицисем çине питĕ нумай бомба пăрахнă.

Кăнтăр Голландире союзниксен çĕр çинчи çарĕсем Германи чикки урлă каçса кайнă. Ытти вырăнсенче, уйрăмах та Аахен хулинчен хĕвелтухăçнерехри Штольберг хули патĕнче тата Люксембургри Дикирх хулинчен хĕвелтухăçнерехри Биздорф хули тулашĕнче вăйлă çапăçаççĕ.

Мозель шывĕн улăхĕнче Мец хулинчен кăнтăртарахра союзниксен çарĕсене тăшман питĕ вăйлă хирĕç тăнă.

Луара шывĕнчен кăнтăртарахра Эльстер генерал ертсе пыракан 19.312 нимĕç тыткăна парăннă.

ЛОНДОН, сентябрĕн 21-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Вăтаçĕр тинĕс таврашĕнчи хĕçпăшаллă вăйĕсен штабĕ паян пичетлесе кăларнă пĕлтерÿре çапла каланă: фронтăн Адриатика участокĕнче питĕ вăйлă çапăçусем пыраççĕ. Кунĕпе çав тери вăйлă çапăçнă хыççăн американецсен 5-мĕш армийĕн чаçĕсем «Гот линине» татнă вырăна сарнă та Фиренцуола хули патне çывхарса çитнĕ.

Енер йывăр бомбардировщиксен пысăк соединенийĕсем, истребительсем хÿтĕлесе пынипе, Венгрири чугун çулсене тата тăшманăн Чехословакири вăрçă объекчĕсене тапăннă. Хатван хулипе Дьер хулинчи сортировка станцийĕсем çине, Будапештри чугун çул кĕперĕсем çине тата Малакири аэродром çине бомбăсем пăрахнă.

Ытти соединенисем тăшманăн Югославири, Грецири тата çапăçусем пыракан районри вăрçă объекчĕсене пыра-пыра тапăннă.

Союзниксен флочĕ Италири Форто Маврицио хулине тата Крит утравĕ çинчи Кания гаванне артиллерирен питĕ вăйлă пенĕ. Çав хулапа гаване питĕ нумай çĕмĕрнĕ.

Англи хаçачĕсем Финляндипе перемири туни çинчен

ЛОНДОН, сентябрĕн 21-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви çапла калать: Финляндипе тунă перемири условийĕсене Румынипе тунă перемири условийĕсемпе танлаштарма пулать, нумай енчен вĕсем пĕр пекех. Англи правительствин шухăшĕпе, Финлянди тунă перемири условийĕсем Финляндишĕн йывăр мар. Совет Союзĕпе Финлянди малашне пĕр-пĕрне шанса çыхăнса тăрасси Финлянди Совет Союзĕ пирки мĕнле позици йышăнассинчен тата вăл перемири условийĕсене мĕнле пурнăçласа пынинчен килет.

Стратегиллĕ шухăшсем Российăна Финн заливне кĕмелли вырăнта тинĕс-çар базине тумашкăн юрăхлă вырăн ыйттарнă, çав база ăна хăйĕн Кронштадтри тĕп тинĕс-çар вăйĕсене хÿтĕлеме кирлĕ. Ханко çурутравне арендăна партарас вырăнне Россия Финляндие çăмăллăх парать, вăл Порккала ятлă пункта арендăна пама ыйтать, çултаăкне уншăн 5 миллион финн марки тÿлесе тăма пулать. Ханко Финляндири чи нумай вăхăт хушши шанса ларман пĕртенпĕр порт пулса тăрать. Порккала сăмсахĕ халь порт мар-ха, анчах та ăна чи лайăх йышши тинĕс-çар бази, вырăссемшĕн питĕ меллĕ база туса хума пулать.

«Дейли телеграф энд Морнинг пост» хаçат Финляндипе тунă перемири условийĕсем çинчен çапла çырать: «Финлянди парламентне ратификацилеме тăратмалли условисем çуркуннехи условисене, сирсе янă çĕршыв хăй кĕтме пултарнă условисенчен лайăхрах». Совет Союзĕ, тăкаксене сапламалли малтан ыйтнă укçа суммине çурри таран чакарса, Финлянди тĕлĕшпе питĕ çемçе кăмăллă пулчĕ, тет хаçат.

«Дейли геральд» хаçат çапла çырать: «Финсем темиçе уйăх хушши ĕçе тăсса, ик еннелле те сулăнса пынă пулин те, халь алă пуснă условисем, пĕтĕмĕшпе илсен, хăйсен çемçелĕхĕпе пĕтĕм тĕнчене тĕлĕнтернĕ çуркуннехи условисем пекех пулса тăраççĕ», тет.

ФИНЛЯНДИН ШАЛТИ ĔÇСЕН МИНИСТРĔ КАЛАНИ

СТОКГОЛЬМ, сентябрĕн 21-мĕшĕ. (ТАСС). Швецири радио пĕлтернĕ тăрăх, Финляндин шалти ĕçсен министрĕ Хиллиля ĕнер каçхине Хельсинкире радиопа сăмах тухса каланă, вăл Совет Союзĕпе тата Великобританипе перемири туни çинчен каланă. Хиллиля çапла каланă: Финлянди, перемири пирки тунă килĕшÿвĕн условийĕсене пурнăçлас тĕлĕшпе мĕн тума май пуррине пурне те тăвĕ, тенĕ.

ФИНЛЯНДИ ВЕНГРИПЕ, ХОРВАТИПЕ ТАТА СЛОВАКИПЕ ДИПЛОМАТИЛЛĔ ÇЫХĂНУ ТЫТМА ПĂРАХНĂ

СТОКГОЛЬМ, сентябрĕн 21-мĕшĕ. (ТАСС). Хельсинкири радио çапла пĕлтернĕ: Финлянди Венгрипе, Хорватипе тата Словакипе дипломатиллĕ çыхăну тытма пăрахнă, тенĕ.

ПОРККАЛА-УДД РАЙОНĔНЧИ ХАЛĂХА УРĂХ ÇĔРЕ КУÇАРАССИ ÇИНЧЕН ПĔЛТЕРНИ

СТОКГОЛЬМ, сентябрĕн 21-мĕшĕ. (ТАСС). Швецири радио пĕлтернĕ тăрăх, Финлянди Совет Союзне арендăна паракан Порккала районĕнчи халăха ĕнер унтан урăх çĕре куçарма пуçланă. Çав районтан пурĕ 10.000 çынна яхăн куçармалла.

РУМЫНИ ПРАВИТЕЛЬСТВИН ЛАРĂВĔ

БУХАРЕСТ, сентябрĕн 18-мĕшĕ. (ТАСС). Кунта Румыни правительствин ларăвĕ пулса иртнĕ, çав ларăва премьер-министр Санатеску генерал председатель пулса ертсе пынă. Унта правительство перемири çинчен тунă килĕшÿве пурнăçа кĕртессипе çыхăнса тăракан ыйтусене сÿтсе-явнă. Правительство полномочнăй министра Криста Потопян генерала тата шалти ĕçсен министрĕн заместительне Дамачана перемири условийĕсене пурнăçа кĕртес ĕçре Совет Союзĕн Верховный Командованийĕн представителĕпе Малиновский маршалпа çыхăнма хушнă.

ГЕРМАНИРИ ЛАРУ-ТĂРУ ÇИНЧЕН

ЛОНДОН, сентябрĕн 21-мĕшĕ. (ТАСС). «Дейли мейл» хаçатăн специальнăй корреспонденчĕ Германи чиккинчен çапла пĕлтерет: Гитлер çав тери аптăраса çитнĕ. Вăл хăй таврашĕнчи çынсенчен хăра пуçланă, вĕсене шанми пулнă. Çакăн пирки вăл хăй ĕлĕкрех пурăннă вырăнсенчен пуринчен те, Берхтесгаденран та, тухса кайнă. Вăл халь пуринчен ытла бронепоезд çинче пурăнать. Германирен килнĕ çÿревçĕсем çапла каласа параççĕ: Германи тылĕнче халь лару-тăру çав тери çивĕчленсе кайнă. Гиммлер халăха хĕсме 24 сехете те пулин чарăнса тăрас пулсан, Гитлерăн пĕтĕм режимĕ ишĕлсе анма пултарнă пулĕччĕ, теççĕ.

ЯПОНИ ХАÇАЧĔН БЕРЛИНРИ КОРРЕСПОНДЕНЧĔ ГЕРМАНИРИ ЛАРУ-ТĂРУ ÇИНЧЕН

ТОКИО, сентябрĕн 21-мĕшĕ. (ТАСС). «Асахи» хаçат сентябрĕн 18-мĕшĕнче тухнă номерте хăйĕн Берлинри корреспонденчĕн статьине пичетлесе кăларнă. Çав статьяра Германири лару-тăру çинчен çырнă. Германи çарĕсем хĕвелтухăçĕнче те, хĕвеланăçĕнче те хăйсен çĕршывĕн чикки патнех чакрĕç, — тесе çырать корреспондент. — Тÿрех çапла каламалла: çав линисем вĕсем Германи оборонин юлашки линийĕсем пулса тăраççĕ. Лару-тăру Германишĕн питĕ хăрушă.

Германи çĕнĕ йышши хĕçпăшалпа усă курма пуçласси çинчен калаçкалани пирки корреспондент çапла калать: «Мĕнле çĕнĕ йышши хĕçпăшал та халь тĕлĕнмелле ĕç тума пултараймасть, вăрçăри лару-тăру халь Германишĕн лайăхланма пултарайрас çук пуль ĕнтĕ», тет.

АМЕРИКĂРИ РАДИО НИМĔÇСЕМ ИСПАНИРЕ ХУÇАЛАННИ ÇИНЧЕН

НЬЮ-ЙОРК, сентябрĕн 16-мĕшĕ. (ТАСС). Америкăра радиопа ăнлантарса паракан Гейдмор çапла калать: нимĕçсем франкистла Испанире хуçаланса пурăнаççĕ, вĕсене унта никам та тĕрĕслемест. Нумай гитлеровецсем Германи вăрçăра аяла пулас пулсан Испанире çăлăнса юлма шутлаççĕ. Темиçе пин нимĕç Испание пынă та ĕнтĕ, вĕсем унта Испанин çар промышленноçĕн 25 процентне ытла контроллесе тăраççĕ.

Германин Испание куçарнă предприятийĕсем пĕтĕм вăйпа ĕçлеççĕ, вĕсем Латинла Америкăпа сутă тума шутлаççĕ.

ГИТЛЕРЛА ПРЕСТУПНИКСЕМ ИСПАНИПЕ АРГЕНТИНĂНА КАЙСА ПЫТАНАÇÇĔ

ЛОНДОН, сентябрĕн 18-мĕшĕ. (ТАСС). «Санди диспетч» хаçатăн дипломатиллĕ ĕççем çинчен çыракан сотрудникĕ çапла çырать: кашни 4—6 сехетрен Барселона хулине (Испани) Штуттгартран нимĕç самолечĕсем вĕçе-вĕçе килеççĕ. Кашни хутĕнчех вĕсем 20 гитлеровеца илсе килеççĕ. Çав гитлеровецсем май пур чухне Германирен тарса хăтăлма тăрăшаççĕ. Испанирен вĕсем Аргентинăна каяççĕ. Çав пассажир самолечĕсем хыççăн вара транспорт самолечĕсем пыраççĕ, вĕсем гитлеровецсен пурлăхĕсемпе хаклă япалисене илсе пыраççĕ.

«Санди экспресс» хаçат хăйĕн умстатьинче çапла çырать: Гитлер Аргентинăра пытанма пултарать, унта ăна лайăх кĕтсе илме пултараççĕ. «Çав çĕршывпа уççăн калаçса илме вăхăт çитрĕ ĕнтĕ,—тесе çырать хаçат. — Эпир, акăлчансем, хамăрăн союзниксемпе пĕрле çапла шутлатпăр: Гитлер хÿтлĕх тупмалли правăна ниçта та курма ан пултартăр. Эпир ăна тата унăн тĕп помощникĕсене чĕррĕн е вилсен те пулин тытса илме тăрăшатпăр, чĕррĕн тытса илсен авантарах. Аргентина Гитлера пулăшсан, Аргентинăна халех экономика тĕлĕшпе хĕсес пулать. Аргентина пире хамăра кирлĕ какайăн пысăкрах пайне парса тăрать. Гитлера тытса илмешкĕн какайсăр тăрса юлмалла пулсан, эпир какайсăр тăрса юлма хатĕр».

ФИНЛЯНДИРЕ ÇĔНĔ ПРАВИТЕЛЬСТВО ТУНĂ

СТОКГОЛЬМ, сентябрĕн 21-мĕшĕ. (ТАСС). Швецири радио çапла пĕлтерет: Финлянди правительстви вырăнтан тухнă. Финлянди президенчĕ Маннергейм çĕнĕ правительство çирĕплетнĕ. Çав правительствăна премьер-министр Урхо Ионес Кастрен ертсе пырать.

Даници лару-тăру

ДАНИРЕ ЧРЕЗВЫЧАЙНĂЙ ПОЛОЖЕНИ ТУСА ХУНĂ.—ДАНИ ПОЛИЦИНЕ САЛАТСА ЯНĂ. — КОПЕНГАГЕНРА КАЛЛЕХ МАССĂЛЛĂ СТАЧКА ПУÇЛАНСА КАЙНĂ.

СТОКГОЛЬМ, сентябрĕн 21-мĕшĕ. (ТАСС). Швецири радио çапла пĕлтерет: пĕтĕм Данире чрезвычайнăй положени туса хунă хыççăн оккупациллĕ влаççем Даници полицие тата мĕнпур гражданла организацисене халех салатса яма хушакан приказ кăларнă. Пĕтĕм Данийĕпех Дани полицейскийĕсене тыта-тыта хупаççĕ.

Оккупациллĕ влаççем чрезвычайнăй положени туни çинчен калакан приказра çапла каланă: законсăр хĕçпăшал тытса усракан çынсене тытнă вырăнтах персе вĕлереççĕ, нимĕç влаçĕсен ĕçĕсене пĕтерсе лартма хăтланакансене çав тери хытă айăплаççĕ, вĕсене вĕлерме те пултараççĕ, тенĕ.

Сентябрĕн 19-мĕшĕнче кăнтăрла Копенгаген хулинче массăллă стачка пуçланса кайнă. Хаçатсем тухма чарăннă. Данире радиостанцисем оккупациллĕ влаççен приказĕсене çеç параççĕ. Дани столицин урамĕсем пуш-пушах, унта çÿреме чарăннă.

Копенгаген хулинче король двореçĕ умĕнче çав двореца сыхласа тăнă Дани полицейскийĕсемпе нимĕçсен тинĕс пехотин отрячĕсем пĕр-пĕрин çине персе илнĕ, 7 нимĕçе вĕлернĕ е амантнă. Дворец полицийĕн коменданчĕ аманнă.

СТОКГОЛЬМ, сентябрĕн 21-мĕшĕ. (ТАСС). Швецири радио пĕлтернĕ тăрăх, сентябрĕн 20-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле Копенгагенăн порт çумĕнчи кварталĕсенче пăшалсемпе перкелешнĕ. Гельсинюлогпа Гельсингер хушшинче поездсем тата паромсем çÿреме чарăннă.

СТОКГОЛЬМ, сентябрĕн 21-мĕшĕ. (ТАСС). Швецири радио пĕлтернĕ тăрăх, Копенгагенри стачка пĕтĕм хулипех сарăлнă, вăл Даници ытти хуласене те, çав шутра Орхус, Ольборг хулисене тата ыттисене те сарăлнă. Чугун çулсем çинче те забастовка пуçланса кайнă. Почта ĕçлеме чарăннă. Вăхăтран вăхăта пĕрре пĕр çĕрте, тепре тепĕр çĕрте датчансемпе нимĕçсем пĕр-пĕринпе перкелешсе илеççĕ.

ПĔРЛЕШÿЛЛĔ НАЦИСЕНЕ ПУЛĂШСА УРА ÇИНЕ ТĂРАТМАЛЛИ АДМИНИСТРАЦИН СЕССИЙĔ УÇĂЛНĂ

ОТТАВА, сентябрĕн 18-мĕшĕ. (ТАСС). Енер Монреаль хулинче пĕрлешÿллĕ нацисене пулăшса ура çине тăратмалли администрацин иккĕмĕш сессийĕ уçăлнă.

Çав сессие совет делегацийĕ те пынă. Совет делегацине СССР Тулашри сутуилÿ Халăх Комиссарĕн заместителĕ В. А. Сергеев юлташ ертсе пырать.

САМОЛЕТ-СНАРЯДСЕМ АНГЛИ ÇИНЧЕ

ЛОНДОН, сентябрĕн 16-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, сентябрĕн 16-мĕшĕнче тул çутăлса килнĕ вăхăтра Англин кăнтăрти графствисем çине, вăл шутра Лондон районĕ çине те, самолет-снарядсем каллех вĕçсе пынă. Чылай сиен тунă. Вилнисемпе аманнисем пур.

КĔСКЕН

* Пĕрлешÿллĕ Штатсенчи республиканецсен партийĕ США президентне суйлама кандидата тăратнă Томас Дьюи Америка тăрăх çÿренĕ поезд унччен пĕр кун маларах çĕмĕрĕлнĕ товарнăй поезд çине пырса тăрăннă. Дьюи йывăр аманнă.

* Франци влаççĕсем 4 адмирала тытса хупма приказ панă. Ытти 7 адмирала вĕсем вырăнтан кăларнă, 5 адмирала отставкăна янă. Петэн вăхăтĕнче политикăллă вырăнсенче ĕçленĕ тинĕс-çар офицерĕсене тата 1942 çулхи ноябрь уйăхĕнче Тулонри флота шыва путарнă вăхăтра сутăнчăкла ĕçленĕ офицерсене суда параççĕ.

* Болгари правительстви союзниксен 342 летчикне (вĕсенчен ытларахăшĕ американецсем) тыткăнран ирĕке кăларнă. Союзниксен 1.000 яхăн летчикне Румынири тĕрмесемпе лагерьсенчен ирĕке кăларнă. (ТАСС).

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

Шупашкарти энергетика техникумĕ 1-мĕш, 2-мĕш тата 3-мĕш курссене вĕренме илесси çинчен пĕлтерет, унта техник-дизелист, техник-теплотехник тата техник-строитель пулма вĕрентеççĕ. Пурĕ 4 çул вĕренмелле.

Техникума 14 çултан пуçласа 25 çула çитнисене илеççĕ.

1-мĕш курса 7 çул вĕреннисене илеççĕ. 1943-мĕшпе 1944-мĕш çулсенче отличник пулса вĕренсе тухнисене экзаменсăрах илеççĕ, ыттисен вырăс чĕлхипе, математикăпа тата СССР Конституцийĕпе испытани тытмалла.

2-мĕш курса вăтам шкулăн 9-мĕшпе 10-мĕш класĕсенчен вĕренсе тухнисене илеççĕ, вĕсене испытанисĕрех илеççĕ, анчах та вĕсен вара кайран 1-мĕш курсра вĕреннĕ пĕтĕмĕшле техника предмечĕсемпе испытани тытмалла пулать; 2-мĕш курса тата çавăн йышши ытти техникумсенче вĕренекен студентсене те илеççĕ.

3-мĕш курса çавăн йышши ытти техникумсен 3-мĕш курсĕнче вĕреннĕ студентсене, мĕн пирки те пулин çав техникумсенчен вĕренсе тухайманнисене илеççĕ.

Техникума кĕме çителĕклĕ хатĕрленменнисем валли техникума кĕме хатĕрлекен курс уçăлать, унта укçасăрах вĕрентеççĕ.

Шупашкарти Стройтехникумра вĕреннĕ студентсене, унтан мĕн пирки те пулин вĕренсе тухайманнисене, ятарласа тăвакан группăсене вĕренме килме чĕнеççĕ.

Заявленисене çак адреспа ямалла: гор. Чебоксары, ул. Плеханова, 7. Заявленисемпе пĕрле çак документсене ямалла: автобиографи, миçе çул вĕреннине кăтартакан свидетельство, хăçан çуралнине кăтартакан свидетельство.

Испытанисем сентябрĕн 21-мĕшĕпе 25-мĕшĕ хушшинче пулса иртеççĕ. Октябрĕн 1-мĕшĕнче вĕрентме пуçлаççĕ.

Вĕренме илнисене стипенди параççĕ, столовăйра апатлантараççĕ, общежитие вырнаçтараççĕ, выртса тăмалли вырăнсем параççĕ.

4-мĕш курсра вĕренекенсене вĕреннĕ вăхăтра Хĕрлĕ Çара илмеççĕ.

СССР Совнаркомĕн 1944 çулхи июлĕн 25-мĕшĕнчи 918-мĕш номерлĕ постановленийĕ тăрăх, испытани тытма ирĕк панисене испытани тытма кирлĕ чухлĕ тата техникума кайса килме кирлĕ чухлĕ вăхăт хушши отпуск параççĕ (ĕçукçи тÿлемесĕр). Техникума вĕренме илнисене вĕренме пуçличчен вунă кун малтан ĕçрен хăтараççĕ.

Испытани тытма пынă чухне е вĕренме пынă чухне ялсоветĕнчен, е райисполкомран, е горисполкомран ĕлĕкхи вырăнта апат-çимĕç пама чарăнни çинчен калакан справка илсе килес пулать, унсăрăн апатçимĕç карточкисем памаççĕ.

Çар çыннисен çемьисемшĕн тăрăшни—фронта пулăшни

Пирĕн государство çар çыннисен çемьисене нумай тĕрлĕ пулăшу парса тăрать. Çар çыннисен çемьисем пособисемпе пенсисем илсе тăраççĕ, вĕсене налог тÿлес, государствăна тырпул парас енĕпе çăмăллăхсем параççĕ, çурт-йĕрсене юсама, тумтирсем туянма, выльăх-чĕрлĕх туянма пулăшаççĕ.

Юлашки вăхăтра партипе совет организацийĕсем тата çар çыннисен çемьисене пулăшас енĕпе ĕçлекен работниксем хăйсен ĕçне чылаях лайăхлатрĕç. Нумай районсенчи пособисемпе пенсисем парас тĕлĕшпе ĕçлекен комиссисем йĕркеллĕ ĕçлеççĕ. Республикăри 13 районра (Йĕпреç, Советски, Вăрмар, Тăвай тата ытти районсенче) пенсисемпе пособисем тÿлес ĕçри парăмсене пĕтĕмпех пĕтернĕ.

Вырăнти партипе совет организацийĕсем çар çыннисен çемьисене ĕçе вырнаçтарас тĕлĕшпе сахал мар тăрăшаççĕ. 1944 çулхи малтанхи ултă уйăх хушшинче колхозсенче 7.672 çынна, промысла кооперацийĕн артелĕсенче 2.870 çынна тата предприятисенче 5.948 çынна ĕçе вырнаçтарнă. Предприятисене ĕçлеме пыракансен чылайĕшĕсен нимĕнле професси те пулман. Çавăнпа та вĕсене кĕске срокрах техникăна алла илме пулăшни кирлĕ пулнă. Çак енĕпе те чылай ĕççене пурнăçа кĕртнĕ. 1944 çулта 1.530 çын професси туяннă. Канашри вагонсем юсакан заводра 310 çын професси илнĕ. Фронтовик арăмĕн Комарова юлташăн вагонсем юсакан заводра кĕнĕ чухне нимĕнле професси те пулман. Халĕ вăл машинист пулса ĕçлет. Улатăрти паровозсем юсакан заводра çар çыннисен çемьисенчен пынă 474 çын ĕçлеççĕ. Вĕсенчен 102-шĕ професси кăçал туяннă. Çар çыннисен çемьисене ĕçе вырнаçтарас тĕлĕшпе Шупашкар тата Ишлей районĕсенче те начар мар ĕçлеççĕ. Шупашкар районĕнче кăçал кăна 317 çынна ĕçе вырнаçтарнă. Вĕсенчен нумайĕшĕсем производствăра, колхозсенче стахановла ĕçлеççĕ.

Кăçалхи çул çар çыннисен çемьисене пахчасем уйăрса парас тата лартма пахчаçимĕç вăрлăхĕ парса пулăшас ĕçе вăйлатнă. Уйрăм пахчасем валли 3434 гектар çĕр уйăрса панă. Çак çĕр лаптăкне пĕтĕмпех акса хăварма вăрлăхсем парса пулăшнă. Çапла, çар çыннисен çемьисене пулăшас тĕлĕшпе ĕçлекен Улатăр хулинчи отдел 12 тонна çĕрулми парса пулăшнă. Вăл хисепрен 1.750 килограмне укçасăрах панă. Пĕтĕмпе Улатăр хулинчи предприятисем 50 тонна ытла çĕрулми салатса панă. Красноармейски, Шупашкар, Сĕнтĕрвăрри, Йĕпреç районĕсенче те çав ĕçе тивĕçлипе организациленĕ. Партипе совет организацийĕсем çар çыннисене хăйсене панă çĕр лаптăкне сухалас, çемçетес енĕпе те сахал мар пулăшнă.

Республикăри колхозсем фронтовиксен çемьисене выльăх-чĕрлĕхсем сахал мар уйăрса параççĕ. 1944 çулта кăна 4.440 çемьене выльăх-чĕрлĕхсем парса пулăшнă. Ку ĕçе уйрăмăнах Калинино, Куславкка тата Вăрмар районĕсенче лайăх йĕркеленĕ. Калинино районĕнче фронтовиксен çемьисене пурĕ 775 пуç выльăх-чĕрлĕх панă.

Республикăри ĕççыннисем тăрăшнипе фронтовиксен çемьисене пулăшма тырпул, укçа-тенкĕ фончĕсем тунă. Çапла, Пăрачкав районĕнчи «Красный пахарь» колхоз пуçарнипе, республикăри колхозсем фронтовиксен çемьисене пулăшма 1.893 гектар çине тырпул тата пахча-çимĕççем акса хăварнă. Çавăн пекех çар çыннисен çемьисене пулăшас тĕлĕшпе ĕçлекен районсенчи отделсем çумĕнче укçа-тенкĕ фончĕсем тунă. Вăл фонд валли 718.569 тенкĕ укçа пухнă. Çак фонда тăвас тĕлĕшпе Улатăр, Етĕрне, Куславкка районĕсенче, Канаш хулинче тимлĕн ĕçленĕ. Продовольстви тата укçа-тенкĕ фончĕсем туни фронтовиксен çемьисен ыйтăвĕсене лайăхрах тивĕçтерме условисем туса пачĕ.

Анчах та çар çыннисене пулăшас ĕçе пур çĕрте те тивĕçлипе йĕркелемен-ха. Пăрачкав, Çĕмĕрле, Кувакино тата ытти хăшпĕр районсенче пособисемпе пенсисем тÿлес ĕçри парăмсене пĕтермен. Ку ĕнтĕ райсовет исполкомĕсем çумĕнчи отделсем çавăрăнăçусăр ĕçленинчен тата çыхăну органĕсем çителĕксĕр ĕçленинчен килнĕ. Çар çыннисен çемьисене пособисемпе пенсисем парас тĕлĕшпе ĕçлекен комиссисен ĕçĕнче пысăк çитменлĕхсем пур. Сĕнтĕр районĕнче комисси членĕсем ларусене вăхăтра пыман пирки тĕрлĕ ыйтусене татса парасси вăрăма юлса пырать. Çĕрпÿ районĕнче те пособисем парас ĕçе тивĕçлипе йĕркелемен. Унта комисси ларăвĕсем вăхăтра пулса иртмеççĕ, пособисемпе пенсисем памалли çинчен çырнă протоколсене комисси членĕсем документсемпе паллашмасăрах алă пусаççĕ. Чылай районсенче çар çыннисен çемьисенче улшăнусем пулнине шута илес ĕçе кирлĕ пек йĕркелемен.

Çар çыннисен çемьисемшĕн тăрăшни — фронта пулăшни пулать. Партипе совет тата комсомол организацийĕсен çав хисеплĕ те ответлă ĕçе чыслăн пурнăçа кĕртсе пымалла. Пирĕн паттăр воинсем хăйсен çемьисем тивĕçлĕ пулăшăва яланах илме пултарассине шанса тăччăр.

Фронтовиксен çемьисене пулăшас тĕлĕшпе ĕçлекен комиссисен ĕçне тĕпренех çĕнетмелле. Вĕсен ответлăхне çĕклемелле. Çавна тума райсовет исполкомĕсемпе парторганизацисен вĕсен ĕçне куллен тĕрĕслесе тăмалла, çитменлĕхсене вăхăтра пĕтерме пулăшмалла. Фронтовиксен çемьисен ыйтăвĕсене татса парас ĕç çине бюрократла пăхакан çынсене çийĕнчех тивĕçлĕ ответ тыттармалла.

ВКП(б) Чăваш Обкомĕн бюровĕ, август уйăхĕнче çар çыннисен çемьисене пулăшас ĕçе Çĕрпÿ районĕнче тата Канаш хулинче мĕнле йĕркеленине пăхса тухса, татăклă кăтартусем пачĕ. Пирĕн задача— çар çыннисен кашни çемьине тĕплĕн пĕлсе тăрасси тата унăн ыйтăвĕсене вăхăтра тивĕçтермелле тăвасси пулать. Çак ĕçе актив çине таянса ĕçлесен, малта пыракан предприятисемпе колхозсен пуçарăвне анлăн сарса пырсан çеç ăнăçлăн пурнăçа кĕртме пулать.

Çар çыннисен çемьисене пулăшас тĕлĕшпе ĕçлекен отделсен тата партипе совет, профсоюз организацийĕсен, предприятисемпе колхозсен руководителĕсен халĕ фронтовиксен çемьисене хĕл валли вутă хатĕрлес, çурт-йĕрсене хĕле хатĕрлес, пахча-çимĕççене пухса кĕртес тĕлĕшпе пулăшмалла. Çавăнпа пĕрлех фронтовиксен çемьисене выльăх-чĕрлĕхсем парса пулăшассине, вĕсене производствăра ĕçлеме активлăн явăçтарассине малалла вăйлатса пымалла.

Пенсисемпе пособисене парас ĕçе йĕркелеме çар çыннисен çемьисене шута илессине лайăхлатмалла. Çар çыннисен çемьисем панă ыйтусене вăхăтра пăхса тухмалла.

Халĕ вĕренÿ çулĕ пуçланчĕ. Пирĕн хисеплĕ тивĕç—çул çитнĕ ачасене пурне те шкулсене явăçтарасси тата лайăх вĕренме условисем туса парасси пулать. Совет правительстви ачасемшĕн тимлĕн тăрăшать. Вăрçă çулĕсенче пирĕн республикăри ĕççыннисем те ачасене пулăшас енĕпе нумай пысăк ĕççем пурнăçа кĕртнĕ. Анчах тунă çитĕнÿсемпе лăпланса лармалла мар. Вăхăта вăраха ямасăрах, шкул ачисене тумтирсем, вĕренÿ хатĕрĕсем çителĕклĕ тупса памалла тăвас пулать.

Фронтовиксен çемьисене пулăшас тĕлĕшпе ĕçлекен отделсен, çутĕç органĕсемпе пĕрле, тăлăха юлнă ачасене воспитани парса ÿстерме кирлĕ мерăсене йышăнмалла. Ачасен çурчĕсене ытларах уçмалла, вĕсенче большевикла йĕркелĕх тумалла.

Çар çыннисен çемьисемшĕн куллен тимлĕн тăрăшни, вĕсен ыйтăвĕсене ăнăçлăн тивĕçтерсе пыни Хĕрлĕ Çарăн офицерĕсемпе боецĕсене пысăк çĕнтерÿсем тума хавхалантарать.

А. КИРЕЕВ,
Чăваш АССР Совнарком Председателĕн заместителĕ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати, ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, заместительпе секретарĕн — 4—26, парти пурнăç пайĕн 3—99, промышленноçпа ялхуçалăх пайĕсен 5—31, издательство конторин — 0—23.

НТ 00703. Типография № 1, Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР, Заказ № 2, ф. б. 59×42 п. л. Тираж 16.000 экз.